«Радиохум – хаçат страницинче: аттепе аннене суйламаççĕ»

Ăçта-ши эсĕ халь, анне?..

Илемлĕ çу кунĕ урамра. 25 çула та çитмен тата унран кăшт аслăрах икĕ хĕрарăм уйра лараççĕ. Инçех те мар выльăхсем. Касăва килнĕ пулас çак икĕ çамрăк ача амăшĕ. Анчах та хăйсене мĕнле тыткаланине пăхсан, вĕсем уя мĕн тĕллевпе килнине манни куçкĕретех. Çумрах вылякан 2 çулхи Денисп 5 çулхи Света пирки пушшех те. Юнкăри С. А. Кузнецовăпа Мăн Тутаркасри О. Г. Блинова район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕн ачасене хӳтĕлессипе ĕçлекен тĕп специалисчĕ И. С. Кабуркина районти шалти ĕçсен тата социаллă хӳтлĕх ĕçченĕсемпе уя пырса тухнă чух çакскерсем 0,75 литр кĕрекен шур эрех кĕленчин пĕрре виççĕмĕш пайне пушатма ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Юнкăри ăнăçсăр çемьесене килнĕ ушкăна ялта пурăнакансем шăпах çак хĕрарăмсене тупма уялла тĕллеттерсе ячĕç. Çак ик ял хĕрарăмне пĕр сăлтав – эрехе тăван ачисенчен те маларах хуни пĕрлештерет-ши? Хăйсен те килте йĕркеллĕ пурăнса апат пĕçерме "вăхăт" çук пулсан, мĕн кураççĕ-ши ачисем? Амăшĕ çеç-и е нумаях пулмасть ашшĕсĕр юлнă – ача айăплă мар вĕт. Вăл сывăх çынран юрату кĕтет, унăн сахалтан та кунне виççĕ хырăм выçать. Анчах та çак икĕ ачан амăшĕсем çакна ăнланмаççĕ пулас. Шăпа хăйсен тĕпренчĕкĕсене пĕччен çитĕнтермелле туса хуни хăех яваплăха татах та ӳстермелли пирки калать вĕтха.

Шел, амăш туйăмне ирĕклĕ пурнăçра путарнă амăшĕсем татах та пур-ха районта. Кашмашри А. К. Толстова ,ав, Ирина Семеновна каланă тăрăх, темиçе çул каяллах Мăн Тутаркасри еркĕнĕ патĕнчен, ачисене пăрахса хăварса, тĕнче касса çӳреме тухса кайнă. Шыранă телейне тупасси пулман, çав хушăра пушарта пĕр ачине ĕмĕрлĕхех çухатать. Чĕри ыратрĕ, тепĕр ачине лайăх пăхма пуçларĕ тетĕр-и? Тем пекехчĕ те пуçне вăл шухăш кĕнĕ пулсан. Çук çав. Пыра-киле тепĕр ачи тĕлĕшпе те амăшĕн прависенчен хăтарма тивнĕ. Аякра та "телей" тупайман хĕрарăм Кашмашра тепĕр арçын тупрĕ. Унпа çуратнă ачи те кунта "çыхса" хураймарĕ ăна. Паян вăл ăçтине килте те, ялта та пĕлмеççĕ.

Кун пек хĕрарăмсем татах та пур çав-ха районта. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Шупуçĕнчи А. В. Кудикова Ойкасра пурăнчĕ хăй суйланă арçынпа. Анчах та çемьеллĕ пурнăç килĕшмерĕ пулас ăна. Хĕрачине воспитани парасси пирки те шутламарĕ. Район сучĕ ăна ачине воспитани парас тĕлĕшпе тивĕçĕсене пурнăçламаншăн уголовнăй йĕркепе айăпларĕ, ĕçлесе юсанмалла турĕ. Ирĕк пурнăçа пĕрре хăнăхсан, ĕç шухăшĕ нумайлăха мар пулĕ çав. Ĕçлеме те пăрахрĕ. Ку çеç те мар, ачине еркĕнĕпе пăрахса хăварса каллех "ирĕке" тухрĕ. Нискассинче тепĕр "мăшăр" тупрĕ. Ачи вара амăшĕшĕн кăна мар, малтанхи еркĕнĕшĕн те ытлашши пулчĕ.

–Тĕрĕслемелли срокĕ те тухман-ха приговорăн, ачине воспитани парас шухăш çаплах пулмарĕ. Халĕ вара приговора чăнласа пурнăçа кĕртрĕç. Условнăй майпа ирĕкрен хăтарни чăннипех тĕрмене лартнипе улшăнчĕ, – ассăн сывлать Ираида Семеновна.

Ачасене тивĕçлĕ воспитани паманни, ашшĕ-амăш правине кирлĕ пек пурнăçламанни суд тенкелĕ патне илсе пыни пирки шутламаççĕ çав хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕсем. Çакă юлашки вăхăтра пĕтĕм ял тăрăхĕнчи ăнăçсăр çемьесенче пулнă чух тепĕр хут палăрчĕ. Карманкассинчи Николаевсем патĕнче комисси июнĕн 19-мĕшĕнче пулнăччĕ. Чӳречe каррисене сирмен пулсан та, хупăнсах çитейменнинчен чӳречe сакки çинче ача ларни аванах курăнать. Алăка питĕрнĕ пирки кĕреймеççĕ унта рейда хутшăнакансем. Тепĕр виçĕ куктан тепре кайсан та çав ӳкерчĕкех: тултан питĕрнĕ алăк, пӳртре пĕччен юлнă ачасем. Хальхинче те усси пулмарĕ. Кĕреймерĕç. Çав каç тепре унта кайсан çеç, амăшне Марина Николаевăна килте тĕл пулаççĕ.

–Кун пек тирпейсĕр кил-çурт урăх ниçта та курман. Пур çĕрте те япаласем йăваланса выртни кăна-и? Пӳртри сывлăш пирки тивĕçлĕ сăмах та тупаймастăп, – тет И. С. Кабуркина. – Ирĕксĕрех виçĕ ачине те районти тĕп больницăри реабилитаци палатине илсе килмелле пулчĕ. Ачисене каярахпа киле илсе килнĕ-ха, пӳрт-çуртне те тепре кайсан пуçтаркалани сисĕнчĕ, анчах ачасене тивĕçлĕ условисем туса паманни, воспитани ĕçĕнчи хăйĕн тивĕçĕсене пурнăçламанни, ачасене киле пĕччен хăварса вĕсен пурнăçне хăрушлăха кĕртсе ӳкерни ахаль иртмерĕ, ун тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарнă. Ачасемшĕн кулянни те, ашшĕ-амăшĕсемшĕн тарăхни те куç умĕнчех Ираида Семеновнан.

Ачасене воспитани парассинче хăйсен тивĕçĕсене пурнăçламаншăн уголовнăй йĕркепе явап тыттарасси пирки Йӳçкассинчи Фаина Лукина та илтмен пулмалла. Ачасене йĕркеллĕ пăхма саккунпа вĕрентмеллеи вара? Виçĕ ачине килте пăрахса хăварса, хваттерне тухса кайнă чух вĕсем пирки шухăшлать-ши? Темле çав. Шухăшланă пулсан, алла черкке те тытас çукчĕ пуль, хваттерĕнче тирпей-илем кӳнĕ пулĕччĕ.

Çатракасси ял тăрăхĕнчи Шупуçĕнчи Г. Б. Орлована тата çул çитмен ачи тĕлĕкре те пулин курăнать-ши ирĕкре ярăнса çӳренĕ чух. Пĕлет-ши вăл халĕ те ачи выçăллă-тутăллă пурăннине, килте ашшĕ Юрий Петрович ачана валли условисем тусах парайманнине. Пĕлесшĕн те мар пулĕ. Амăш чунĕ пулнă пулсан, ачана пăрахса хăварнă пулĕччĕ-ши?

Çак ял тăрăхĕнчи Т. В. Малыгинана çул çитмен çамрăксемпе тата вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комисси ларăвĕнче кăçал пĕрре пăхса тухнăччĕ. Ун хыççăн килте те йĕрке тунăччĕ, ĕçменччĕ пĕр хушă.

–Лайăх пурăнатпăр, – хаваспах пĕлтерчĕ арçын ача, шкул хыççăн тумтирне улăштарса, урама велосипедпа ярăнма кайма пуçтарăннăскер (асăннă комисси кăшт вăхăтран вырăна çитсех килчĕ лару-тăру хăш енне улшăннине пĕлме). Хаваслă пулмасăр. Тирпейлĕ килте амăш пĕçернĕ ăшă яшкана çинĕ хыççăн лăпкă чунпа урама юлташсемпе выляма тухнинчен хакли мĕн пултăр ачашăн. Нумаях пулмасть тунă рейдра вара ӳкерчĕк каллех малти çаврăмалла кайни курăннă. Мĕн çитмест-ши пире пурнăçра? Мăшăрĕ ĕçлет, ачипăчи пур вăй-хал парса тăма. Кил илемĕ, çемье ăшши çеç пулмалла та.

Районти 127 ăнăççăр çемьере те çакна ăнланасшăн мар çав. Вĕсенчи 275 ачан чун ыратăвне хăйсене кун-çул панă ашшĕ-амăшĕ те илтмест пулсан, камра тупас вĕсен юратупа çемье ăшшине? Кăçалхи çур çулта çакнашкал рейда 45 хутчен ирттернĕ. Пĕтĕмпе 227 çемьере пулнă. Хăйсем ашшĕ-амăш пулнине маннисенне 23 ачине районти тĕп больницăри реабилитаци палатине илсе килме тивнĕ. Çавăнта çеç тăраниччен апат çисе курмаллаи вара вĕсен? Çавăнта çеç тирпейлĕ вырăн çинче çывăрса курмалла-и? Мĕнпе айăпа кĕчĕç вĕсем хăйсен шăпи умĕнче? Яваплăха туйман ашшĕ-амăшĕнчен çуралмалла пулнишĕн-и? Çакăн пек рейдсем вăхăтĕнче ĕнтĕ 10 ача хушăнă ашшĕ-амăш ăшшине туйманнисен йышне. Кăçалхи çур çулта кăна 6 ашшĕпе амăшне çав правасенчен хăтарнă. 8 ача ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлчĕ, лешсем чĕрĕ-сывă çĕртех. Каярахпа та пулин айăпа ăнланса илсен юратчĕ-ха. Ытларах чух ĕç-пуç çавăнпа вĕçленет çав. Сентимĕрти С. В. Колбасована икĕ çул каяллах амăш правинчен хăтарнăччĕ. Ик ачине пăрахса хăварса, "тутлă" пурнăçра ярăнса çӳреме тухса кайнăшăн. Юрать-ха, ыр çынсем тупăнчĕç: аслă ачине çемьене пурăнма илчĕç. Хĕрачи ашшĕпе пурăнать. Ытлашши ан пултăрах вăл ашшĕшĕн те. Çав ачасен тĕлĕшпе амăш прависенчен хăтарнă хыççăн çуратнă тепĕр ачи те пулин амăш ăшшине туйтăрччĕ. Хальлĕхе вăл амăш çумĕнчех-ха.

Кам чарать этеме этем чунлĕ пулма? Мĕн чарать хамăр çуратнă ачасене юратса ӳстерме? Районти 82 ачана опекăна илнĕ çемьесенчен тĕслĕх илмелле çӳлерех асăннă арçынсемпе хĕрарăмсен. Ачасене пурăнма илнĕ районти 3 çемьери мăшăрсем пек илемлĕ чунчĕреллĕ пулмалла. Килĕшӳпе тату пурнăç хуçаланакан çемьере вара ют ачасем те телейлĕ ӳсеççĕ, пурнăç çулне тĕрĕс суйлаççĕ. Наташа Александрова, акă, амăшне çав правасенчен хăтарнă хыççăн опекунсемпе пурăнать. Вĕренӳре "5" паллăсемпе ĕлкĕре пырвать. Опекăра пурăнакан 17 ача – "ударник". Ку вăл опекăра пурăнакан шкул çулĕнчи 65 вĕренекентен. Кăçал вĕсенчен 4-шĕ шкул пĕтерчĕ. Вĕсенчен виççĕшĕ аслă, тепри вăтам вĕренӳ заведенине вĕренме кĕрес ĕмĕтлĕ. Кармăшри Денис Одинцов пĕлтĕр шкул пĕтерчĕ те халĕ Шупашкарти химипе технологи техникумĕнче вĕренет. Хăй тăлăх пулнине ан систĕр тесе чун ăшшине шеллемеççĕ опекунсем. Мăн Тутаркасри Максимпа Денис Бочкаревсем профтехучилище пĕтерсе профессии илчĕç. Ф. Колдашова Вăрнарти совхозтехникум пĕтерчĕ. Опекунсен чун ăшшипе ачапа пĕр чĕлхе тупма пĕлни çинчен калаççĕ çак тĕслĕхсем.

Куç умĕнчен вара паян та чакăр хура куçлă чуна килĕшмелле арçын ача кайма пĕлмест. Ача çуртĕнчи ытти ачасенчен ытларах уйрăлса тăрать. Тытма пĕлет хăйне, хăйĕншĕн хăйĕнех çине тăмаллине те ăнланать пулмалла 10–11 çултискер.

–Манăн 11 сехетре командăпа футболла выляма каймалла, ман валли вара лотерея билечĕ юлман. Кам хыççăн кĕме пулать-ши ман япаласем туянма. Е тата:

–Мана тухтăр кирлĕччĕ. Ăçтан курма пулать-ши ăна, – çине тăрсах ыйтать вăл процедурăсем вăхăтĕнче.

–Ĕнер эпĕ унтан 20 тенкĕпе пĕчĕк мечĕк туянтăм. Хĕрĕм питĕ мечĕкпе вылясшăн та. Укçипе киоскран мороженăйжвачка илсе килчĕ. Çавăн хыççăн манпа тăтăш каласма пуçларĕ, - тет санаторине ачипе килнĕ хĕрарăм.

Эх, мăнтарăн ачи. Юратнă çывăх çынсен ăшши çитмест пуль çав ăна. Çавăнпах ĕнтĕ хăйĕнпе ăшшăн каласнă çынсем патнелле турăнать. Пылак çимĕç çиес килнĕскер, интернатра панă мечĕкне сутрĕ пулĕ. Ăçта-ши унăн ашшĕ, курасшăнши амăшĕ хăйĕн çемье ăшшисĕр тунсăхлакан маттур та пултаруллă ывăлне? Мĕн тăвать-ши ачи хăйшĕн хăй тăрăшнă чухне? Мĕн тума шутласççĕ-ши тата паянхи каласура асăннă ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачин çак вăрттăн тунсăхпа çунакан куçлă çак арçын ача пек интернатра çитĕнмелле ан пултăр тесе? Ачисемшĕн тăван кил тăван килех, кирек хăш вăхăтра та чун туртнă вырăн пултăр тесе?

Л. ТУКТИНА.

Кун пирки хаçатра çырнăччĕ

Шывпа тивĕçтересси лайăхланмаллах

Кăçалхи июлĕн 4-мĕшĕнче район хаçатĕнче «Мĕнпе айăпа кĕтĕмĕр-ши?» статья пичетленсе тухнăччĕ. Статья авторĕ Л. Атласкин унта Муркаш ял тăрăхĕн территорийĕнче шывпа тивĕçтересси кирлĕ пек пулса пыманни пирки пăшăрханса пĕлтерет. Чăнах та, 131 № Федераллă Саккунпа килĕшӳллĕн çынсене шывпа тивĕçтересси ял тăрăхĕсен тивĕçĕ пулса тăрать. Анчах та хальлĕхе çак ĕçе Муркашра тата Çĕньял Муркашра Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ туса пырать.

Çурлатри, Шаптак ялĕсенче, Муркашри Красноармейски, Фронтовая, Новая колхозная, Колхозная урамсене шывпа тивĕçтересси вара Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх çинче. Шыв башнипе шыв пăрăхĕсем те вĕсем çинчех. Çавăнпа та ял тăрăхĕ паянхи куна халăха шывпа тивĕçтерессине хăй çине илме пултаймасть.

Çавна каламалла. Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятине вăл шывпа тивĕçтерĕшĕн çынсем вăхăтрах тата йĕркеллĕ тӳлесе тăраççĕ. Çав вăхăтрах вара ку çăмăллăхшăн Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăха вăхăтра тата туллин тӳлесе тăракансем сахал. Çак вăхăта калас пулсан, кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса июнĕн 30-мĕшĕчченхи тапăхрта шывпа усă курнăшăн тӳлемелли парăм 124956 тенкĕ те 80 пуспа танлашать. Уйрăмах çак çынсене палăртса хăварнă пулăттăм: çыру авторĕн Л. Атласкинăн парăмĕ 1401 тенкĕ те 24 пус, В.З. Ермолаевăн – 3459 тенкĕ те 5 пус, Е.Ф. Пугачеван – 3661 тенкĕ те 15 пус, Н.А. Ядыковăн – 5393 тенкĕ те 8 пус.

Нумайăшĕ хăйсем шывпа çуллахи вăхăтра усă кураймастпăр теççĕ. Парăмсене парса татманнине çавăнпа çыхăнтараççĕ. Кун пек чухне тӳлеместĕп тени вырăнлах та мар пулĕ. Тавлашу ан пултăр тесен кашни киле шывпа мĕн чухлĕ усă курнине палăртма счетчик лартмалла. Мĕншĕн тесен эпир пурте шывне нормăпа пăхнă чухлĕ пĕтеймеместпĕр те пулĕ, укçине вара тӳлес пулать. Çав вăхăтрах хăшĕсем шывпа пахчасене шăварма усă кураççĕ. Кунпа пĕрлех теприсем хăйсен çăлсем пулнипе, пĕрлешӳллĕ хуçалăх башнинчен килекен шывпа усă курмастпăр тесе шывпа усă курнăшăн тӳлеместпĕр теççĕ. Çавăнпа та ку ыйтупа çирĕп йĕрке кирлех. Шыв укçасăр юхса килмест, уншăн тӳлесех пулать.

Муркашра шывпа тивĕçтермелли системăна çĕнĕрен тăвассине маларах палăртнăччĕ. Паянхи куна унăн проекчĕ хатĕр, экспертиза тăвасси кăна юлнă. Анчах та бюджетра укçатенкĕ çуккипе çак ĕçе пуçăнма май килмест. Пур ĕçе пĕр хăрăс пурнăçлама май килмест вĕт-ха. Хальхи вăхăтра ЧР Президенчĕн программипе килĕшӳллĕн 2008 çулччен кашни ял патне асфальт çул çитерме палăртнă. Шывпа тивĕçтерес тĕлĕшпе те çитес вăхăтрах палăрăмлă улшăнусем пулаççех.

Урам хушшинчи тасалăхпа йĕркелĕх пирки те каласа хăвармалла. Хăш-пĕр çĕрте тахçан авал лартнă йывăççем пур. Вĕсем хуçăлса та ӳкеççĕ, электролинисем татăлнипе аварисем пулаççĕ. Çынсем вара электричествăсăр тăрса юлаççĕ. Çулсем тума та çакă чăрмантарать. Çавăнпа та ялсенче пурăнакансен хăйсен те пуçаруллăрах пуласчĕ, тирпейлĕх пирки ытларах тăрăшасчĕ.

Н. НИКИТИН,
Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.

Район прокуратуринче

Ĕç укçине тӳлеменшĕн

Ĕç тата ĕç сыхлавĕ пирки калакан законодательствăна пăснăшăн РФ административлă майпа правăна пăсни çинчен калакан кодексăн 5.27 статйипе ответ тыттарма пăхнă. Асăнса хăвармалла, унччен çак кодексăн 5.27 статйин 1 пайĕпе килĕшӳллĕн предпринимательство ĕçĕпе ĕçлекенсене уйăхри чи пĕчĕк ĕç укçи шайĕн пилĕк виçинчен пуçласа аллă виçи таран штрафлама е административлă ĕçе-хĕле 90 талăк таран çăлăм лартма, юридици вăйĕнчи çынсене вара уйăхри чи пĕчĕк ĕç укçи шайĕн виççĕр виçинчен пуçласа пилĕкçĕр хут пысăклатнă виçи таран штрафлама е административлă ĕçе-хĕле 90 талăклăха чарса лартма пултараççĕ.

2007 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче РФ административлă майпа правăна пăсни çинчен калакан кодексăн нормисен санкцийĕсене улшăнусем кĕртнĕ. Халĕ вара штрафсене палăртнă чухне ĕç укçин чи пĕчĕк шайĕн виçине шута илмеççĕ, штрафсем конкретлă суммăсемпе палăртнă.

Çапла вара ĕç тата ĕç сыхлавĕ пирки калакан законодательствăна пăснăшăн должноçри çынсене 500 тенкĕрен пуçласа 5000 тенкĕ таран, уйрăм предпринимательсене 500 тенкĕрен пуçласа 5000 тенкĕ таран административлă майпа штрафлама е административлă ĕçе-хĕле 90 талăк таран чарса лартма, юридици вăйĕнчи çынсене вара 5000 тенкĕрен пуçласа 30000 тенкĕ таран штрафлама е административлă ĕçе-хĕле 90 талăк таран чарса лартма пултараççĕ.

Д. ВИКТОРОВ,
район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.

Ыр кăмăллăх ан иксĕлтĕр

Пысăк укçа мар, тимлĕх кирлĕ

Çак кунсенче Муркаш районне салтак амăшĕсен комитечĕн ертӳçи Лариса Ивановна Егорова килсе кайрĕ. Чи малтанах район администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕпе А.Н. Ивановпа ĕçлĕ калаçу ирттерчĕç, малашне пурнăçламалли ĕçсене палăртрĕç. Сăмах май, комитет пирĕн районти Шуйцев ячĕллĕ вăрçăпа патриотика клубне хăйсен хӳтлĕхне илнĕ. Халĕ те республика хăни пушă алăпа килмерĕ, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне парнесем илсе килчĕ. Эпĕ вара ыр кăмăллăхăн çăлкуçне уçса пама тата комитетăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарма ыйтрăм.

– Чи малтанах калаçăва комитет ĕçĕ-хĕлĕ пирки пуçлам. Эпир хамăр хӳтлĕхе çапăçура айăпсăр пуçĕсене хунă салтаксен çемйисене, салтаксене, инвалид-ачасене, ваттисен çурчĕсене тата ытти тимлĕхе тивĕçнисене илетпĕр. Халĕ те акă пушă алăпа килмерĕм, пулăшăва тивĕçлисем валли тумтирсем илсе килтĕм. Ку тĕлĕшпе эпĕ республикăри ытти районсенче пулма ĕлкĕртĕм те ĕнтĕ.

Пирĕн комитет обществăлла организаци шутланать. Çавăнпа та ытларах пулăшу ыйтма тивет. Ку енĕпе пире чылай ертӳçĕ ăнланать тата пулăшать. Эпир хамăршăн ыйтмастпăр вĕтха, айăпсăр инкек тӳснисем валли. Акă "Рассвет" организаци ертӳçи А.К. Мукина тăватçĕр штук шкул çипуçĕ уйăрса пачĕ. Çавăн пекех "Улицы Лондона" магазин ертӳçи М.В. Чернова чылай тумтирпе тивĕçтерчĕ. Шăпах эпĕ паян çавсен пĕр пайне илсе килтĕм те ĕнтĕ.

Сăмахăма ыр кăмăллăх ĕçне хутшăнакансем пирки пуçартăм та малалла та пысăк тав сăмахне тивĕçнисенех асăнам: "Россельхозбанк" управляющийĕ И. Письменская, "Технотрон" ООО ертӳçи В.А. Галкин, çавăн пекех "Байкал" ООО, "Трио" ООО ертӳçисем ыркăмăллăхран аякра тăмаççĕ, яланах ырă пуçару тăваççĕ. "Сибирь-Кавказ" авиакомпани тата чукун çул компанийĕ пире тӳлевсĕр билетсемпе тивĕçтерчĕç. Паллах, ыркăмăллăха хутшăнакасене пурне те асăнса та пĕтереймĕн, вĕсем татах та пур. Эпĕ вара çак майпа усă курса пулăшуçăсене чĕрерентав тăватăп.

Хуйхă-суйхă уйрăм çемьене кăна пырса тивмест. Ăна пĕрле пайлама тата тимлĕх уйăрма пĕлес пулать. Шутласа пăхăр-ха мĕн чухлĕ айăпсăр, тин çеç пурнăç çулĕ çине тăма ĕмĕтленнĕ салтакăн куçĕ вăхăтсăр хупăнать. Пурне те чăтма хăнăхнă амăшĕсем вара йăлтах тӳсеççĕ. Вĕсем çуллĕ шайри ертӳçĕсм патне алă тăсса çӳремеççĕ. Эпир вара çавăн йышшисене куçран вĕçертес мар тата мĕн пултарнă таран тимлĕх уйăрас тесе тăрăшатпăр.

Эпир салтак амăшĕсемпе вăхăтран-вăхăта Çурçĕр Кавказ вăрçă округне, Карачаево-Черкессине тата ытти регионсене çитсе килетпĕр. Пирĕн çул çӳрев аякри салтаксемшĕн питĕ кирлине туйсах тăратпăр. Ăшă каласу, амăшĕсемпе курнăçни вĕсене самай хавхалантарать. Çавăнпа та эпир май пур таран унти выränсене çитме тăрăшатпăр.

Юлашкинчен çакна палăртса хăварам. Августăн 5-мĕшĕнче тĕп хуламăрта айăпсăр çĕре кĕнĕ салтаксен асăну кунĕ пулать. Çапла майпа эпир вĕсем пирки манманнине палăртасшăн.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.
Сăн ӳкерчĕкре: парне панă самант.